Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

57 (8018) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи утă (июль) уйăхĕн 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕнĕ çăкăрăн пĕрремĕш бункерĕ



*Вырмана тухнă май кашнийĕнех умра çĕнĕ те ырă тĕллевсем. Сăн ÿкерчĕкре сулахайран сылтăмалла: хуçалăх ертÿçи М. Шишокин, çĕнĕ тырăна пĕрремĕш бункер çапса тĕшĕленĕ С. Наумов комбайнерпа ăна пулăшакан В. Иванов, З. Степанова тĕп агроном , 23-мĕш вырмана хутшăнакан М. Иванов водитель.*

«Восток» хуçалăхра пурнăçпа тан пыма тăрăшнине утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче кунти Арман уйне çитсен тепĕр хут тĕл пултăм. С. Наумов тытса пыракан «Енисей-1200» комбайн «московская-39» кĕрхи тулă пуссинче черетлĕ вырмана çул парса пĕрремĕш бункер тултарчĕ.

– Вырмана «хир карапне» тăрăшса хатĕрлерĕмĕр те районта пуринчен малтан патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕнчен ĕçе тухма ирĕк илтĕмĕр. Вырмана тирпейлĕ ирттерес ĕмĕтпе хире тухрăмăр, – терĕç С. Наумов комбайнерпа ăна пулăшакан В. Иванов.

Хуçалăх ертÿçи М. Шишокин та, тĕп агроном З. Степанова та ĕçлекенсемпе юнашарах. Вĕсен сăмахĕнчен хуçалăхăн кăçалхи вырмара 84 гектар кĕртрисем тата 241 гектар çуртрисем вырса кĕртмелли палăрчĕ. Çак ĕç калăпăшне çĕнме хирте 2 комбайн ĕçлĕ. Паян СК-5 «Нива» комбайна ĕçе хатĕрлессипе Л. Михайловпа Р. Васильев паркра юлашки ĕçсем пурнăçлатчĕç.

– Механизаторсем туслă ĕçленипе паян кăна сенаж вĕçлерĕмĕр. Пĕр ĕçе тепринпе сыхăнтарса кăнтăр иртсен вырмана тухрăмăр. Кĕрхи кунăн кашни уяр сехечĕ паха, – терĕ комбайнерсене ăнăçу сунса хуçалăх ертÿçи М. Шишокин.

Хиртен таврăннă май йĕтем çине кĕрсе тухрăмăр. Кунта та тырă алмалли-типĕтмелли агрегатсем ĕçе хатĕр. Вырмана хатĕрленсе хуçалăх çĕнĕ ÿпле туни Мулкачкассисем алă усса ларманни пирки калать. 5-мĕш çул вырмана машинист пулса хутшăнакан А. Иванов **(иккĕмĕш сăн ÿкерчĕкре)** хăйсем çĕнĕ тырă йышăнма хатĕррине çирĕплетрĕ.

Çапла, ĕнер «симĕс ĕç çинче» вăй хунă хуçалăх ĕçченĕсем паян тулли кăмăлпа вырмана тухрĕç.

**А. БЕЛОВ.**

Вырма-2012

***Кĕске справка. Çурла уйăхĕ алăкран шаккаканă вăхăтра пирĕнтен кашниех вырма пирки сăмах хускатать. Вулакансене пĕлме. Кăçалхи вырмара районти çĕр ĕççенĕн пĕтĕмпе 13637 гектар çинчен тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене пуçтарса кĕртмелле. Уйрăмах пысăк лаптăксем «Свобода» (1074 гектар), «Ударник» (1018 га), Суворов яч. хис. (790 га), Ильич яч. хис. (700 га) хуçалăхсенче. Пĕрлешÿллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вырмана пурĕ 51 «хир карапĕ» тухасси паллă. Вĕсемпе пĕрле 5-шĕ çĕннисем пулĕç. Вĕсем А. Пихтеров фермерăннипе «Передовик», «Герой», «Путь Ильича», «ВаСем» хуçалăхсенче.***

***Пур коллективсенче те вырмари ĕç планĕсем хатĕр, вĕсемпе ĕçлекенсене паллаштарнă.***



Паян – Раççей Христос тĕнне йышăннă кун

## Виççĕмĕш çул – патшалăх уявĕ

***2010 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев «Раççей çар мухтавĕн кунĕсемпе паллă датисем çинчен» Федераллă саккунăн 11 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă саккуна алă пуснă. Раççейăн паллă кунĕсем шутĕнче тепĕр дата кун çути курнă – Раççей Христос тĕнне йышăннă кун. Июлĕн 28-мĕшĕнче ăна официаллă майпа виççĕмĕш хут уявлатпăр.***

Çак кун Вырăс православи чиркĕвĕ апостолсемпе танлашнă Владимир кнеçе (960–1015) асăнса сума сăвать.

Христос тĕнне йышăннă куна патшалăх пĕлтерĕшне парас ыйтăва Вырăс православи чиркĕвĕ сĕннĕ.

2008 çулхи июнь уйăхĕнче Вырăс православи чиркĕвĕн архиерей соборĕ Апостолсемпе танлашнă светуй Владимир кнеç кунĕнче июлĕн 28-мĕшĕнче аслă уяв уставĕпе кĕлĕ ирттерме йышăннă, кунпа пĕрлех Раççей, Украина тата Беларуç çĕр-шывĕсен ертÿçисене светуй Владимир кнеç кунне патшалăх пĕлтерĕшлĕ кунĕсен шутне кĕртме сĕннĕ.

Раççейре РФ Президенчĕн Дмитрий Медведевăн 2009 çулхи августăн 14-мĕшĕнчи хушăвне тата Правительство председателĕн Владимир Путинăн çав çулхи августăн 27-мĕшĕнчи хушăвне пурнăçланă май Раççей Христос тĕнне йышăннă куна паллă кунсем шутне кĕртессин саккунĕн проектне Культура министерстви туса хатĕрленĕ. Саккун проектне РФ Правительствин Президиумĕн ларăвĕнче 2010 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче пăхса тухнă. 2010 çулхи майăн 21-мĕшĕнче саккун проектне РФ Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думи йышăннă, майăн 26-мĕшĕнче РФ Федераллă Пухăвĕн Федераци Канашĕ ырланă.

988 çулта Раççей Христос тĕнне йышăнасси светуй Владимир кнеç ячĕпе çыхăннă. Историксем ăна Аслă кнеç, чиркÿ – апостолсемпе танлашнă кнеç, халăх вара Хĕрлĕ Хĕвел Владимир тесе ят панă.

Кашнин пĕлмелле

## Тавралăх илемĕшĕн пĕрле тăрăшар

**Хисеплĕ район çыннисем!**

Тăван тавралăх илемĕ тата тирпейлĕхĕ кашни çынран килет, хăтлă вырăнта вара пурăнма та килĕшÿллĕ. Шел пулин те паян ку тĕлĕшпе кăмăла хуçаканни нумайрах тĕл пулать. Йĕри-тавра тинкерер-ха. Çырма-çатрасенче, урамсенче, çул хĕррипе тасамарлăх чылай, çакă йăлтах çынсен хуçалăхĕсенчен тухать. Унта вара çунаканни, çĕрекенни – мĕн тĕрли кăна çук пулĕ? Ача-пăча та çакăнтах вылять-чупать, асли те иртсе çÿрет. Пытарма кирлĕ мар, киревсĕрри те куç умне чылай тухать. Уйрăмах юлашки тапхăрта асфальт çулпа иртсе çÿрекенсем çул хĕррине михĕсемпе, хутаçсемпе, хăшĕ вара ахаль кăна тĕрлĕ çÿп-çап пăрахса хăварма пуçларĕç. Иртсе çÿреме те килĕшÿсĕр. Малтанхи кун кăна тиесе кайнă пулсан та çав вырăнта тепĕр куннех тасамарлăх купи ÿсме пуçлать. Палăртса хăварас килет, районта тĕрлĕ тăрăхри делегаци ĕçлĕ çул çÿреве тăтăшах килет. Район сăн-сăпатне вара çак йĕркесĕрлĕх самай варалать.

Москакасси ял тăрăхĕнче çĕнĕ технологипе ĕçлекен полигон хытă кайăш йышăнать. Кунти автомашина кашни ял тăрăхне ятарлă графикпа килĕшÿллĕн тухса çÿрет. Хăш ял пырассине ял тăрăхĕсен ĕçченĕсем маларах пĕлтерессĕ. Çавăнпа та кашниех михĕсемпе хушма хуçалăхра пухăннă каяша палăртнă вырăна илсе тухма пултарать, ăна уйрăм çыннсенчен тÿлевсĕрех йышăнаççĕ. Пĕр рейс тума кăна вунă пин тенкĕ ытла тухса каять, ку ял тăрăхĕн укçи-тенкипе пурнăçланать. Паллах, кашни эрнере турттарса тухма майĕ çук, çакă йăлтах укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавăнпа та кунта чи малтан çыннăн ответлăхĕ, чунлăхĕ, ăнланулăхĕ кирлĕ.

Асăннă йĕркепе килĕшмесĕр хытă каяша палăртман вырăна тухса пăрахакансене вара икĕ пин тенкĕ таран штраф укçи тÿлеттермелли йĕрке пур. Ăна пурнăçлассишĕн ял тăрăхĕн ĕçченĕсем ответлă.

**Хисеплĕ ентешсем! Тасалăхпа тирпейлĕх – хамăршăнах. Çавăнпа та кунта кашнин ĕçне тĕрĕс ăнланни кирлĕ.**

**В. НИКИТИН,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата общественность инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертÿçи.**

Республикăра

## Фракцисен ертÿçисемпе тĕл пулнă

Утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕпе Юрий Поповпа тата депутатсен фракцийĕсен ертÿçисемпе Анатолий Князевпа («Пĕрлĕхлĕ Раççей»), Игорь Моляковпа («Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей»), Дмитрий Евсеевпа (РФКП), Андрей Кулагинпа (РЛДП) ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ.

Юрий Попов Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕ 6 сесси ларăвне ирттернине, унта 115 саккун проектне пăхса тухнине пĕлтернĕ. Республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ саккунсене йышăннă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕпе калаçнă май депутатсен фракцийĕсен ертÿçисем хăйсем республикăн саккун кăларакан органĕнче мĕнле ĕçлени пирки каласа кăтартнă.

Политика партийĕсен представителĕсем йывăрлăх çуратакан самантсем пирки сăмах пуçарнă.

Михаил Игнатьев депутатсем çĕкленĕ ыйтусем синче тĕплĕн чарăнса тăнă.

**Изольда БЕЛОВА.**

## Усрава илнĕшĕн – пособи

Республика парламенчĕн депутачĕсем ачана усрава илнĕшĕн (усыновление) пĕр хутчен паракан пособи пирки калакан саккун проектне пĕрремĕш вулавра йышăннă.

Чăваш Республикинче ачасене усрава илесси çулсерен чакса пырать. Акă 2009 çулта 90 ачана, 2010 çулта – 80 ачана, 2011 çулта – 63 ачана усрава илнĕ пулсан, кăçалхи майăн пĕрремĕшĕ тĕлне республикăри 12 ачана кăна усрава илнĕ. Чăваш Енре çак лару-тăру çивĕччине усрава илнĕ чух хавхалантару çуккипе çыхăнтараççĕ. Кун йышши хавхалантарăва ытти регионсенче çирĕплетнĕ. Статистика çирĕплетнĕ тăрăх усрава илекенсенчен ытларахăшĕ – ют çĕр-шывра пурăнакансем.

Çавна май малтанласа шутланă тăрăх пĕр ачана усрава илнĕшĕн пĕр хутчен паракан пособи 300 пин тенкĕне яхăн пулмалла. Ăна 2015 çултанпа тÿлесе тăма палăртаççĕ.

## 1,5 миллиард тенкĕ ытла

Шăпах çакăн чухлĕ сумма шыраса илнĕ Чăваш Республикинчи суд приставĕсем кăçалхи пĕрремĕш çур çулта. Иртнĕ çул çак вăхăтра ку сумма 1 млрд. та 314 млн. тенкĕпе танлашнăччĕ. 446 млн. тенкĕне федераллă тата консолидированнăй бюджетсене куçарнă. Исполнительнăй производствăпа ĕç укçи 19,3 млн. тенкĕ ытла шыраса илнĕ.

Суд приставĕсем-исполнительсем 2149 парăмçăна чикĕ леш енне кайма чарнă, çапла майпа 3 млн. та 263 пин тенкĕне таварнă.

Службăн дознавателĕсем 411 уголовлă ĕç пуçарнă, вăл шутран 369-шĕ – алимент тÿлессинчен пăрăнса пурăнакансем тĕлĕшпе. Административлă майпа право йĕркине пăснин факчĕсемпе 3 пин ытла ĕç пуçарнă.

Лару

## Кун йĕркинчи ыйтусемпе

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 20-мĕш ларăвĕ июлĕн 27-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче иртрĕ. Лару ĕçне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертÿçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертÿçисем хутшăнчĕç.

Депутатсем ларура çак ыйтусене пăхса тухрĕç:

1. Депутатсен районти Пухăвĕн 2011 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи «Муркаш районĕн 2012 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

2. Муркаш районĕн тĕрĕслевпе шутлав органĕ çинчен.

3. Нанимателĕн (ĕç паракан) полномочийĕсене пурнăçлакан муниципаллă служащисем служба йĕркелĕхне пурнăçланине тĕрĕслекен тата конфликтлă ларутăрусене татса паракан комисси çинчен.

4. Депутатсен районти Пухăвĕн «Муркаш районĕн Уставне улшăнусем кĕртесси çинчен» йышăнăвĕн проекчĕпе публичнăй слушани ирттересси çинчен.

5. Наградăлама тăратасси çинчен.

Çÿлте асăннă ыйтусемпе депутатсем тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Чавса çыртмалла килсе ан тухтăр

Ял пурнăçĕн ыйтăвĕсем тавра

Эпĕ районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатри «Килти хуçалăхсенче ытларах» корреспонденцие питĕ тимлĕ вуласа тухрăм. Унта илсе кăтартнă пек килти хуçалăхсенче тытса усракан майăракаллă шултра выльăхсен йышĕ 11845 пуç пулсан тата ку вăл районĕпе усракан пĕтĕм выльăх йышĕн 69,8 процентĕпе танлашать пулсан, ял хуçалăх предприятийĕсенчи фермăсенче пĕтĕмпе те 30 процент анчах вĕтăх! Уйрăм хуçалăхсене вара никамах та пулăшса кайман. Салатма кăна тăрăшаççĕ. Сутлăх сĕтĕн хакнех илер. Ăна килограмне 7 тенкĕпе сутса килти хушма хăçалăхăн мĕнле тытăнса тăмалла?

Халĕ вара пирĕн пысăк хуçалăхсем мĕн тăваççĕ-ха? 2002 çулта пичетлесе кăларнă Муркаш районĕн кĕске энциклопедийĕнче çак йĕркесем пур: «Районта 177 ял, 13787 уйрăм çынсен харпăр хăйĕн çурчĕ». Халĕ ĕнтĕ вĕсем ун чухнĕ анчах мар. Çав вăхăтрах ĕнесем пĕтĕмпе те 6810 пуç çеç тытса усраççĕ («Ç. я»).

Апла пулсан кашни иккĕмĕш е виççĕмĕш хуçалăхра ăна усрамаççĕ. Хамăр вара уйрăм çынсен килти хушма хуçалăхне аталантаратпăр тетпĕр. Ăçта-ха тĕрĕслĕх?

Район хаçачĕн 2011 çулхи августăн 17-мĕшĕнчи номерĕнче Э. Симакова çырнă статья манăн куç умне пулчĕ. Иртнĕ çул уйрăм çынсен килти хуçалăхĕсенче 7419 пуç пулнă. Халĕ вара, çӳлерех палăртрăм ĕнтĕ, 6810 пуç. 609 пуç чухлĕ чакнă. Ку вĕт вăл 60 пуç выльăхлă 10 кĕтӳ!

Ним шухăшласа тăмасăр сĕт хакне палăрмаллах ӳстерни кирлĕ. Килти хуçалăха уя çине тăратмасăр май çук. Пысăк комплекссенче ытларах продукци илес тесе выльăхсене темĕнле те тăрантараççĕ. Вĕсене сĕт пахалăхĕ интереслентермест, сĕт ытларах суса илсе пултăр. Унсăрăн пирĕн ачасен малашлăхра йӳçĕ турăх кăна, ăна та Аргентинăран е Бразилирен кӳрсе килнине, ĕçме тивĕ.

Ача чухне кĕтӳ кĕтме пĕрре кăна мар çӳренĕ. Кĕтӳре выльăхсен шучĕ 70 пуç таран е ытларах та пулнă. Халĕ вара 40 пуçран кăшт иртет кăна. Вĕсене пĕтĕм ялĕнчен пухаççĕ. Ун чухне Муркашри Колхозная, Красноармейская тата Фронтовая урамсенчен, кăштах Советскипе Ленин урамĕсенчен çавăн чухлĕ пухăннă.

Нумаях пулмасть эпĕ хам ача чухне выльăхсем кĕтсе çӳренĕ вырăнсене çитсе килтĕм. Мĕн курма пулать-ха унта? Улăхçарансем питĕ таса мар, çум курăк айне пулнă. Вар хушшисемпе шырлансем татах пысăкланса кайнă. Вĕсенче никам та йывăç лартмасть. Сăмах май кăçал çуркунне Тутар Республикинче пĕр миллион ытла тĕп йывăç лартса хăварнă.

Хирсем те таса мар. Пусă çаврăнăшне тĕрĕс йĕркелесе пымасан вĕсем ăçтан таса пулччăр-ха. Малтанхи вăхăтра чĕретпе уйсенче тĕрлĕ культурăсем акнă пулсан, халĕ ытларах – урпа. Ăна та пĕр вырăнта темиçе çул акаççĕ.

Çапла, ял хуçалăхĕнче нимĕн шухăшласа тăмасăр палăрмаллă улшăнусем тăвас пулать. Унсăрăн кайран чавса çыртмалла пулса тухĕ.

**В. МАСТЕРОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**
Муркаш ялĕ.

# Тĕне кĕртессин – хăйĕн йĕрки

Православи ыйтăвĕсемпе

***Тĕне кĕни çын пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнать. Вăл кирлĕ те усăллă. Тĕне кĕни çын ырăлăх та çутă енне тăнине, малашне вăл Турă заповечĕсене пурнăçласа Турра яланах чĕрере упрассине пĕлтерет.***

***Тĕне кĕртессин – хăйĕн йĕрки. Кун пирки тĕплĕнрех ăнлантарса пама Муркашри Владимирски Турă Амăшĕн турăшĕн православи прихучĕн настоятельне Федор аттене ыйтрăмăр.***

**– Федор атте, тĕне кĕртме çынна малтанах хатĕрлемелле е ку пĕлтерĕшлĕ мар?**

– Çынна тĕне кĕртиччен чиркӳре унпа, ача пулсан унăн ашшĕ-амăшĕпе (ача 12 çула çитмен пулсан) чăн тĕн çинчен пĕлтерекен калаçусем ирттереççĕ. Калаçу кашнинпех уйрăм пырать, çавăнпа та калаçу конкретлă мĕн пирки пуласси те, унăн вăрăмăшĕ те çын хăйĕн аталанăвĕн мĕнле тапхăрĕнче пынинчен килет.

Тĕне кĕртме чи кирлĕ услови – тĕне кĕрес текенĕн православи ĕненĕвĕ тата унра ӳкĕнӳ туйăмĕ пулни. Марк çырнă таса Евангелире акă мĕнле калани пур: «Кам ĕненсе тĕне кĕрĕ, вăл çăлăнĕ; кам ĕненмĕ, вăл айăплă пулĕ». Вĕсен ĕненĕвĕ малашне Турă сăмахĕне тата Чиркӳ каланипе килĕшӳллĕн пурăнассине куçмалла.

**– Калаçу, тĕпрен илсен, мĕн пирки пырать?**

– Калаçăва май пур таран нумайрах та анлăрах ирттерме тăрăшмалла. Малтанхи калаçура, паллах, çын тĕне кĕрес шухăшĕ мĕнле аталаннине пĕлме тăрăшатпăр, çак таса ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пирки калаçатпăр. Тĕне кĕрес текенĕн ыйтăвĕсене хуравлатпăр. Тĕн символĕ пирки, библири тĕп заповедьсем пирки сăмах пуçаратпăр. Каласа панине çын тĕрĕс ăнлантăр тесе тăрăшатпăр. Тĕне кĕрес текене христианство вĕрентĕвĕ тĕрĕх Турă, тĕнче, çын пĕлтерĕшне ăнланса илме пулăшатпăр.

Тĕне кĕртес умĕн ӳкĕнӳ тата çылăхсене каçармалли самант пур. Çынна хăйĕн айăпĕсене йышăнса малашне вĕсенчен писсе çĕнĕ пурнăçпа пурăнма тытăнма кирлĕ çакă, Турра тата Унăн Чиркĕвне итлесе пырса пурăнма.

**– Çын чирлет пулсан ăна çав вăхăтрах тĕне кĕртме май пур-и?**

– Кун пек чухне ăна тĕне кĕртме юрать. Анчах та тĕне кĕртес умĕн пулмалли калаçусене вăл сывалсанах ирттермелле.

**– Кама тĕне кĕртме юрамасть?**

– Православи тĕнĕн тата христианство палăртнă кăмăл-сипетĕн тĕпе хунă чăнлăхĕсене йышăнман çынсене тĕне кĕртме пултараймастпăр. Çавăн пекех çын тĕшмĕшлĕхе ĕненет пулсан ăна тĕне кĕртмеççĕ, ĕçе каярах хăвараççĕ: вăл çак таса ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнланса иличчен.

Тĕне кĕртес умĕн ирттернĕ калаçусен тĕллевĕ çав çынна Христос пĕвĕ пек тата святой халăх пек Чиркĕве кĕртни пулса тăрать: «Эсир те Христос тăл-пĕвĕ пулатăр, пĕрерĕн-пĕрерĕн Унăн пайĕсем пулатăр» (Коринф çыннисем патне янă малтанхи çыруран). «Эсир суйласа илнĕ йăх, патша пек священниксем, таса халăх, Турă хăй валли суйласа илнĕ çынсем; хăвăра тĕттĕмрен тĕлĕнмелле çутине Чĕнсе Кĕртекенĕн ырăлăхĕсене пĕлтерсе тăма суйласа илнĕ сире;..» – çак йĕркесем те каланине çирĕплетеççĕ. Вĕсене Петр апостолăн малтанхи çырăвĕнче вулама пултаратăр.

**– Хăш вăхăтра тĕне кĕни пурпĕрех-и е çук?**

– Чиркĕвĕн литурги пурнăçĕнче тĕне кĕртессин тĕпрен пыракан пĕлтерĕшĕ ан çухалтăр тесен Мăн кун умĕн, христианство Чиркĕвĕн вун икĕ тĕп тата аслă уявĕсем умĕн тĕне кĕни вырăнлăрах. Ытти чухне те тĕне кĕме юрать, паллах, анчах та йĕркене пăхăнмалла.

Чи пĕлтерĕшли – тĕне кĕрес текен çын тулли кăмăлпа çак куна кĕтни, хăйĕн пурнăçĕнче питĕ пĕлтерĕшлĕ самант пулассине ăнланса илни.

**– Тепĕр ыйту: Муркашри чиркӳре тĕне хăш вăхăтра кĕртеççĕ?**

– Тĕне кĕртессине ытларах чухне шăмат кунсенче 12 сехетре ирттерме тăрăшатпăр. Чăн тĕн çинчен пĕлтерекен калаçусем ирттересси пирки вара маларах пирĕнпе çыхăнса калаçса татăлмалла.

**– Тавах интереслĕ калаçушăн.**

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

Хĕрӳ тапхăр

# Хĕле хатĕрленетпĕр

***Майĕпен çуртсене хутса ăшăтас тапхăр патне те çывхаратпăр. Мĕн авалтанах ваттисем çулла çуна, хĕлле урапа хатĕрлеме хушнă. Нимĕн те калаймăн, питĕ вырăнлă сăмахсем. Ку каларăшпа коммуналлă хуçалăх системи еплерех усă курать-ха? Çакăн тупсăмне пĕлме эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертӳçинчен В. НИКИТИНРАН ыйтрăм.***

**– Владимир Германович, хатĕрленӳ ĕçĕсем епле шайра-ха, хăшĕсене туса ирттернĕ, хăшĕсем ытларах тимлĕх ыйтаççĕ?**

– Çакăн пирки калаçма иртерех пек туйăнать пулин те умра – çуртсене хутса ăшăтас тапхăр. Пĕтĕмĕшле илсен вара çак ĕçĕн хĕрӳ вăхăчĕ пырать. Çакна шкулсенче, ача сачĕсенче, больницăсенче, ытти социаллă сферă объекчĕсенче пыракан ĕçсем те çирĕплетеççĕ. Палăртса хăвармалла, хăш-пĕр йывăрлăхсем те пур. Çапах та палăртнă вăхăтчен йĕркене кĕртсе çитерессе шанас килет.

Хĕле хатĕрленесси вăл – котельнăйсене йĕркене кĕртесси, нумай хваттерлĕ çуртсенче юсав ĕçĕсем тăвасси, çуртсенчи ăшă узелĕсене, ăшă парса тăракан системăсене юсасси-хатĕрлесси. Паянхи кун тĕлне Муркашри пĕрремĕш тата иккĕмĕш котельнăйсенче юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Халĕ ку енĕпе Ярапайкассинчинче тимлеççĕ.

Москакассинчи нумай хваттерлĕ тăватă çурта ку таранччен пĕрле хутса ăшăтнă. Халĕ вара (унта пурăнакансем тимленипе) кашни хваттере уйрăммăн хутса ăшăтасси çине куçараççĕ.

**– Унччен вăхăчĕ нумай-ха, çапах та хатĕрленӳ ĕçĕсене хăçан вĕçлеме палăртнă?**

– Кашни çулах хатĕрленӳ ĕçне октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçленĕ, кăçал та çаплах палăртатпăр. Унччен вара мĕн пурнăçланин пахалăхне ятарлă ĕç комиссийĕ энергетика тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсене вырăна тухса тĕрĕслет, тивĕçлĕ хак парать. Пахалăх ятарлă паспортра курăнать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

Налук ыйтăвĕсемпе

# Çĕнĕлĕхсем пур

Кусман пурлăх тытакан уйрăм çынсемпе транспорт хуçисем июль уйăхĕнче 2011 çулшăн налук уведомленийĕсене заказлă çырусемпе илме тытăнчĕç. Вĕсене массăллă пичетлесе Раççейри Федераллă налук службин Чул хулари регионсем хушшинчи инспекцийĕ ярса парать.

Çĕнĕлĕх кунта – бланкăн тата илмелли пайĕ. Ку вăл – заявителĕн налук уведомленийĕнчи тĕрĕс мар информаци пирки заявлени çырмаллин формы. Халĕ вара налук тӳлекенсем çак заявление çырса тултарса çитмен кирлĕ информаци пирки налук инспекцине пĕлтерме пултараççĕ.

Заявлени 3 пайран тăрать:

1. «Заявленире кăтартнă налук хуракан объект манăн харпăрлăхра çук, эпĕ унпа усă курмастăп». Кунта налук тӳлекен çулталăк пуçламăшĕ тĕлне е нихăçан та унăн харпăрлăхĕнче пулман объектсене палăртса çырма пултарать.

2. «Налук уведомленийĕнче мĕнле объектсемшĕн налук тӳлемеллине кăтартман». Ку ĕнтĕ хăйĕн харпăрлăхĕнчи мĕнле объектсемшĕн налук тӳлемеллине кăтартманни пулать.

3. «Налук уведомленийĕнче тĕрĕс мар даннăйсем кăтартнă». Налук уведомленийĕсене тĕрĕс мар сведенисем кайни пулма пултарать. Калăпăр, налук базине йăнăш кăтартнă (транспорт хатĕрĕн лаша вăйне, çĕр участокĕн кадастр хакне, пурлăхăн инвентаризаци хакне т. ыт. те).

Налук тӳлекен заявление почтăпа ярса пама пултарать (инспекцири ещĕке ямалла) е Раççей Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн сайчĕ урлă ярса памалла.

Налук органĕсем заявленисене граждансен ыйтăвĕсене пăхса тухмалли вăхăтра пăхса тухаççĕ. Инспекци чи малтанах хăйĕн даннăйсен бази урлă информацие тĕрĕслет. Техникăлла йăнăш кайнă пулсан ăна тӳрлетеççĕ те ун пирки налук тӳлекене хыпарлаççĕ. Енчен йăнăш кайни налук тӳлевĕн сумми çине витĕм кӳнĕ пулсан, налук суммине çĕнĕрен шутласа налук тӳлекен патне ярса параççĕ.

Енчен те заявленири информаци даннăйсен базин сведенийĕсемпе пĕр килмест пулсан, инспекци регистраци органĕсене запрос ярать.

Хурав илнĕ хыççăн налук органĕн даннăйĕсен базине кирлĕ улшăнусене палăртса заявителе хурав ярса парать.

Енчен те налук органĕн даннăйĕсен базине кĕртнĕ улшăнусемпе налук сумми улшăнмасть пулсан, налук органĕ тӳлев суммине çĕнĕрен шутласа палăртса налук уведомленийĕ хатĕрлет, хуравпа пĕрле ăна налук тӳлекен адресĕпе ярса парать.

Кунсăр пусне 2011 çулшăн пурлăхран илмелли налуксене тӳлемелли тапхăр улшăннă. Уйрăм çынсен пурлăхĕшĕн, транспорт тата çĕр налукĕсене граждансен 2012 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен тӳлесе татмалла.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**налук тӳлекенсене регистрацилекен, учета илекен тата вĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ.**

Список адвокатов

**УТВЕРЖДЕН**
**решением Совета Адвокатской палаты Чувашской Республики от 15.06.2012г. (протокол № 7)**

## СПИСОК
## адвокатов Адвокатской палаты Чувашской Республики, задействованных в деятельности государственной системы бесплатной юридической помощи на территории Моргаушского района Чувашской Республики в 2012 году

| № п/п | Ф.И.О. адвоката | Регистрационный номер адвоката в реестре адвокатов Чувашской Республики | Адвокатское образование | Адрес, по которому планируется осуществлять прием граждан | Телефоны (сот.), электронная почта |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Егорова Надежда Алексеевна | 21/444 | Коллегия адвокатов «Республиканская» ЧР (Моргаушский филиал) | Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 с.т. 8-906-383-01-00 | сот. 8-908-851-92-36 |
| 2. | Иванов Владимир Вячеславович | 21/342 | Коллегия адвокатов «Республиканская» ЧР (Моргаушский филиал) | Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 сот. 8-906-383-01-00 | сот. 8-906-383-01-00 |
| 3. | Сорокин Валерий Александрович | 21/84 | Коллегия адвокатов «Республиканская» ЧР (Моргаушский филиал) | Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 с.т. 8-906-383-01-00 | сот. 8-906-380-91-30 |

# Спортпа юрă-кĕвĕ яланах унпа юнашар



Çынсем тĕрлĕрен пулаççĕ çав. Пĕрисем патне яланах чун туртать. Теприсемпе вара вĕсем хăвна япăх туман пулсан та калаçас та килмест. Măн Сĕнтĕрте пурăнакан В. Егоров вара пĕрремĕш ушкăна кĕрет. Муркашри ветерансен хорне çÿрекенскер, кĕслине йăтса мĕнле сцена çине тухать – сцена тÿрех çуталса каять. Зала тыткăнлама пĕлет вăл: ăшă куллипе те, кĕсле каласа шăрантаракан юррисемпе те. Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Пăва ялĕнче çуралнăскер, ача чухнех юрра-кĕвве юратни ăна паян та пурнăçра пулăшса пырать. Ашшĕ Зиновий Кириллович балалайкăпа ăста вылятчĕ çав. «Чуна йывăртарах чухне тÿрех алла кĕсле илетĕп», – тетВиталий Зиновьевич та. Ун чухне кăна мар. Хĕллехи вăрăм каçсенче ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн мăшăрĕпе Альбина Андреевнăпа пĕрле юрă тăсса яраççĕ те чун уçăлсах каять вара. Хĕрĕ те вĕсемпе пĕрле шăрантарать юрăсене.

Мăшăрĕпе иккĕшĕ те Măн Сĕнтĕрти «Янаш» халăх ансамблĕнче вăл мĕн йĕркеленсе кайнăранпах çÿреççĕ. Çавăнпа та Муркашри ветерансен хорне çÿреме чĕнсен хапăллассах килĕшрĕ Виталий Зиновьевич. Çакă ăна спортпа туслă пулма та нимĕн чухлĕ чăрмантармасть. Хăй вăл – физкультура учителĕ. Германинче танксен çарĕнче службăра тăнă хыççăн тÿрех тăван шкулта завхозра, кайран водительте ĕçлеме пуçлать те 2 çултан Канашри педучилищĕне вĕренме кĕрет. Çакăнтах вăл професси илнипе пĕрле мăшăр та «тупать».

Тăван ялта 8 çул ачасене физкультурăна вĕрентнĕ хыççăн мăшăрĕн çуралнă тăрăхне (Галина Андреевна Анатри Олкашра çуралнă) Măн Сĕнтĕре куçса килеççĕ. Кунта та хăйсен юратнă ĕçĕпе ĕçлеме пуçлаççĕ, пĕри ачасене спорта юратма вĕрентет, тепри пуçламăш классене пĕлÿ парать. Сĕнтĕре куçса килсен тепĕр çулхине, 1987 çулта, Виталий Зиновьевич пединститутран заочно майпа вĕренсе тухать. Физкультура урокĕсене ирттернипе пĕрлех шашка-шахмат секцийĕсене ертсе пырать.

Сцена çинчи пурнăçпа спортри ăнăçусене Виталий Зиновьевич пĕрпĕринчен уйăрмасть.

– Сцена çинче те, стадионти пекех, кăтарту тума пĕлмелле, – тет вăл.

Кăтартусем вара унăн, чăннипех те, сцена çинче те, спортра та пурах çав. Вăл кĕслипе анатри чăвашсен такмакĕсене юрлама пуçласан саккăрла çаптарса ташша ярас килет. Сасси чуна тыткăнлать.

Спортра тунă çитĕнĕвĕсене вара 40 ытла кубок, тем тĕрлĕ диплом çирĕплетсе параççĕ. 35 çул шкулта ачасене воспитани панă май шкул администрацийĕн Хисеп грамотинчен пуçласа РФ Вĕрентÿ министерствин Хисеп грамоти таранах пур. Унăн вĕренекенĕ пулнă Э. Савельев учителĕн профессинех суйласа илчĕ: паян ачасене ирĕклĕ майпа кĕрешме хăнăхтарать.

Виталий Зиновьевич вара паян та районта пулса иртекен спорт ăмăртăвĕсене хавассăн хутшăнать. Шашкăлла-шахматла выляссипе те, волейболла та – çапла майпа дипломсемпе те хушăнсах пыраççĕ. Вăл – вырăс шашкилле выляссипе СССР спорт мастерĕн кандидачĕ.

Вĕсенчен те хакли вара – спортра юрă Виталий Зиновьевича пурнăç илемне туйма пулăшни. Мăшăрĕпе иккĕшĕ, хĕрпе ывăл çитĕнтернĕскерсем, ачисене те пурнăçăн кашни самантне хаклама вĕрентнĕ, тĕрĕс çулпа утма хăнăхтарнă. Пĕрпĕрне юратса, килĕштерсе пурăнаççĕ Егоровсем. Спорт, юрăпа ташă вĕсене пурнăçра татах та çывăхлатать.

– Сывă пурнăç йĕркипе пурăнние нимĕн те çитмест, – теççĕ вĕсем.

**Л. ПАВЛОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă мăшăра, аннене, ырă кăмăллă хунямана, пускилие – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Юлия Николаевна АВЕРКИЕВĂНА** паян 55 çулхи юбилейпа ăшшăн саламлатпăр.

Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, чир-чĕр çывăха ан пытăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, кÿршĕри Смирновсен çемйи.**



Юратнă аннене, хунямана, çепĕç чунлă кукамая, хисеплĕ тăвана – Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Сарчак ялĕнче пурăнакан **Галина Дмитриевна ВОЛКОВĂНА** çитес кунсенче 50 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Пире, 3 ачине, пăхса ÿстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн, ырă сăмахпа вĕрентсе пынăшăн, йывăрлăхра ăнланнăшăн, пулăшнăшăн, пурăнма вăй-хăват хушса пынăшăн сан умра паян çĕре çити пуç таятпăр. Хисеплĕ çыннăмăр! Татах нумай çул таса сывлăхпа пире савăнтарса пурăнма Турри пиллĕх патăр сана.

**Пысăк салампа: хĕрĕпе кĕрĕвĕ, ывăлĕсем, мăнукĕ, тăванĕсем.**



Пирĕн юратнă мăшăра, хаклăран та хаклă аннене, кăмăллă асаннене, хисеплĕ вĕрентекене – Шурча ялĕнче пурăнакан **Юлия Ивановна САВЕЛЬЕВĂНА** паян 83 çул тултарнă ятпа тата мăшăрĕпе Геннадий Васильевичпа çемье çавăрса алла аллăн 61 çул пĕрле пурăннă ятпа чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Мăнаслă Атăл шывĕн çулĕ евĕр вăрăм ĕмĕр, çăлкуç пек тапса тăракан вăйхал, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сире пулăшсах пытăр тата нумай çул усратăр. Эпир сире çав тери хисеплетпĕр, юратса пăхса çитĕнтернĕшĕн çĕре çити пуç таятпăр.

**Ăша салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, унăн вĕренекенĕсем.**

## Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

# Ачасен шăпи кама кăсăклантарать-ши?

«Мĕншĕн Йÿçкассинчи вăтам шкул халĕ тин вăраннă?» Çак ыйтăвăн хуравне район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен çамрăксене тата вĕсен прависене хÿтĕлекен комиссин иртнĕ ларăвĕнче комисси ертÿçи Л. Тарасова та, ыттисем те – никам та тупаймарĕ. Çак шкулта вĕренекен икĕ ача шăпи питĕ хумхантарать: пĕри вĕренÿ çулĕнче 126 кун сиктернĕ, тепри – 112! Пĕррехмĕш чĕрĕкрех шкула пымании çине-çинех пулнă, анчах та шкул вĕренÿ çулĕ пĕтсен кăна «чан çапма пуçланă»: вĕсен характеристикисене комиссие ярса панă. Çапла майпа ĕç-пуçа районти комисси çине тиес тенĕши?.. Комисси хальлĕхе хăйĕн полномочийĕсене кура шкул ку таранччен çак лару-тăру тĕлĕшпе конкретлă мĕнле ĕçсем пурнăçланине пĕлес тесе çырупа тухма шутларĕ.

Ашшĕ-амăшĕ пирки мĕн каламаллине вара пĕлмелле те мар. Пĕрин амăшĕ ачине тата тепĕр çул саккăрмĕш класа лартса хăварни çинчен комисси ларăвĕнче кăна пĕлчĕ! Ача вĕренÿ çулĕнче 700 ытла урок сиктернĕ пулсан эсир мĕн тăвăттăрччĕ? Тен хуравĕ вулакансен тупăнать. Амăшĕн тупăнмарĕ. Çак амăшпе комисси членĕсем пĕрремĕш хут мар тĕл пулчĕç ĕнтĕ. Хальхинче унăн çул çитмен ачине хулари паркра ашшĕпе пĕрле(!) эрех-сăра ĕçнĕшĕн тытса чарнă мĕн. Ашшĕ çемьерен тахçанах кайнă, анчах та хулана ачисем пырсан çапла майпа хăналамалла-и вĕсене? Пулăшу пачах та урăхла пулмалла пек. Ача обществăлла йĕркене пăснăшăн вара амăшĕн явап тытмалла – вăл пăхса çитереймен.

Тепĕр хĕрарăм вара – чăн та тĕлĕнмелле хĕрарăм. Вăл виçĕ ача амăшĕ пулсан та ăна пĕрре те амăш тесе калас килмест: кайăк пулнă пулсан вăл куккук пулса çуралатчĕ пулĕ – иккĕленÿ çук. Пĕлтĕр çуркунне «вĕçсе» тухса кайнă та çемьерен, тепĕр çултан кăна килне килнĕ. Ачисем патне тетĕр-и? Çук çав. Амăшĕн капиталĕн свидетельстви патне. Унпа пĕрле килнĕ тепĕр тăватă арçын ахăртнех свидетельствăна илсе хĕрарăма укçа пама шантарнă. Килте документсем хушшинче кирлине тупайманран хĕрарăм кĕçĕн ачине – «пуянлăхне» – хăйпе пĕрле машинăна лартса тухса кайнă. Упăшки тытса чарайман: тăватă арçын хирĕç тăнă. Юрать-ха халĕ ачана киле ашшĕ патне таварнă.

Чуманкасси ял тăрăхĕнчи пĕр ялтан тÿрех виçĕ амăшне комисси ларăвне чĕннĕччĕ. Маларах, çемьесене тĕрĕсленĕ чух, вĕсем ÿсĕр пулнă мĕн, хăйсен амăш тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламан. Анчах та ларăва пĕри кăна килчĕ. Тепĕр иккĕшĕ вăхăт тупайман пулас: эрехĕ ялти лавккарах – инçе каймалла мар, комисси вара – Муркашра. Лавкка хыççăн вара нимĕнле комисси те, ачасем те кирлĕ мар пуль çав.

«Ачасен шăпи амăшĕсене кăсăклантармасть пулсан мĕнле-ха?» – лару вĕçленсен те Федор аттен (вăл та комиссире) ыйтусем пĕтмерĕç. Тен, ачасем тĕлĕшпе тухса тăракан ыйтусене татса пама унпа канашлани амăшĕсен куçне уçĕ? Аса илтерĕпĕр, Федор атте Чăваш Республикинче ачасен прависен уполномоченнăйĕн Муркаш районĕнчи представителĕ. Унăн обществăлла йышăну пÿлĕмĕ район администрацийĕн суртĕнчи 120 пÿлĕмре вырнаçнă (Муркаш сали, Мир урамĕ, 6 сурт). Ĕç вăхăчĕ – кашни уйăхăн пĕрремĕш тата виççĕмĕш кĕçнерни кунĕсем, 13 сехетрен пуçласа 15 сехетчен. Телефон номерĕсем: 8-83541-62-2-31; 8-927-843-24-10.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ватăсен айванлăхĕпе усă курас тенĕ

## Çĕр ыйтăвĕ – судра

***Маларах йышăннă саккунсене çĕнĕлĕхсем е улшăнусем кĕртнине, çĕнĕрен те çĕнĕ саккунсем вăя кĕрсе пынине пур чухне пĕлсе те юлаймастăн. Хăшĕсем пирки вара пĕр-пĕр ĕçе пурнăçлама тытăнсан кăна пĕлетĕн. Ку вăл пирĕншĕн – вăй питти, ĕçлекен çынсемшĕн çапла. Апла 70 çултан иртнисем саккунсене пĕлменнинчен пачах та тĕлĕнме кирлĕ мар. Çавăнпа вĕсен айванлăхĕпе усă курса пуяс текенсем те сахал мар. Акă Ильинка ял тăрăхĕнче пурăнакан икĕ кинемейĕн те (1932 çулта çуралнăскерсем) хăйсен пай çĕрĕсене сутнă чух темĕн тĕрлĕ пăтăрмах витĕр тухма тивнĕ. Вĕсен мĕн пур ыйтăвне Муркаш район сучĕ татса панă.***

Ильинка ял тăрăхĕнчи икĕ кинемей (икĕ ĕçе уйрăммăн пăхса тухнă) Чăваш Республикин Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерствине иксĕм тăратса суда тухрĕç. Иксенче вĕсем хăйсен пай çĕрĕсене сутма 2011 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче тунă суту-илÿ килĕшĕвне пăрахăçлама ыйтса çырнă.

Çак утăма вĕсем акă мĕнпе ăнлантарчĕç. Ун чухне суйса витернипе тата лару-тăру çапла пулса тухнăран çĕр участокĕсен суту-илÿ килĕшĕвĕ çине алă пуснă мĕн вĕсем. Хăйсем каланă тăрăх çĕр пайĕсемшĕн ытла та йÿнĕ хак палăртнă пулнă имĕш. Суту-илÿ килĕшĕвне тунă хыççăн вара вĕсене (хăйсем шану хучĕ панă çынсем ĕçленипе) пурлăха хаклакан организацирен справка илсе килсе кăтартаççĕ: рынок хакĕпе вĕсен çĕр лаптăкĕсем чылай хаклăрах тăраççĕ иккен. Ватă çынсене çĕр лаптăкĕсене вĕсене парнелеме килĕшÿ тума сĕнеççĕ.

Çапла карчăксене улталаса çак çĕрсемпе пуяс текенсем те тупăннă. Вĕсем ватă çынсен шухăшне пăтратса янă та.

Маларах асăннă килĕшÿпе вара Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви çав вăхăта çĕр пайĕсемшĕн палăртнă суммăна тÿлеме ĕлкĕреймен пулнă.

Ответ тытакан (республикăри Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви) декабрĕн 13-мĕшĕнчи çырăвĕнче килĕшÿсене пăрахăçлама килĕшменни пирки пĕлтернĕ.

Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви хирĕçле иксемпе тухрĕ: Ильинка ял тăрăхĕнче пурăнакан çĕр хуçисем министерствăпа суту-илÿ килĕшĕвĕ тунă хыççăн пай çĕрĕсене урăх çынна парнеленине çирĕплетекен документсене, пай çĕрĕ урăх çын çине куçнине регистрацилес йышăнăва пăрахăçлама ыйтса çырнă.

Пай çĕрĕсен лаптăкĕсене Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерствине çĕр лаптăкĕсене йышăннин-панин акчĕпе 2011 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче панă. Çав актăн 2-мĕш пунктĕнче палăртнă тăрăх икĕ ен хушшинче килĕшменлĕхсем çукки тата тÿлеве туллин пурнăçлани пирки палăртнă. Çав çулхи декабрĕн 13-мĕшĕнче министерство çĕр лаптăкне сутакансене суту-илÿ саккунлă пулнине çирĕплетсе пĕлтернĕ.

Раççей Федерацийĕн Граждандла кодексăн 450 статйин 2 пайĕпе килĕшÿллĕн суту-илÿ килĕшĕвне пăрахăçлама пĕр енĕ килĕшĕве пăснă пулсан, килĕшĕве суд йышăнăвĕпе пăрахăçланă пулсан тата ытти йĕркесене пăснă пулсан кăна пăрахăçлама ирĕк пур. Ку тĕслĕхсенче суд çак енсене тупса палăртман. Министерство укçана вăхăтра куçарма пултарайманнине вара çĕр хуçисем хăйсен реквизичĕсене вăхăтра тăратманнипе çыхăннă. Çакна ĕçри хутсене тишкерсе суд çирĕплетрĕ. Каярах çĕрсемшĕн укçа тÿленине çĕр хуçисем счечĕсем çине укçа куçарнин ĕç хучĕсем çирĕплетеççĕ. Апла пулсан саккун йĕркипе килĕшÿсене пурнăçланă.

Килĕшÿсем çине тепĕр çын суйса витернипе тата лару-тăру çапла пулса тухнăран алă пуснине çирĕплетме ыйтса çын никам та испа тухман.

Çапла вара ЧР Муркаш район сучĕ 2012 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе çĕр хуçисен искĕсене суд тивĕçтермерĕ.

**А. АЛЕКСЕЕВА,**
**ЧР Муркаш район сучĕн судйи.**

## Чун ыратăвĕ

# Тавралăх тирпейлĕхĕ е ответлăха çухатни

Кашни çыннăн тивĕçлĕ условипе пурăнма ирĕк пур. Шел пулин те çакă пур чухне те пурнăçланмасть. Йÿçкасси ялĕнчи Çамрăксен урамĕнче пурăнакансем тасамарлăха путнă тесен те йăнăшмăн. Çакăн пирки унта пурăнакансем хăйсен çăхавĕнче палăртнă. Çавна май Йÿçкасси ял тăрăхне çитсе килме тиврĕ.

Çăхавра сăннланă йĕркесем куç умне тухрĕç. Пĕтĕмĕшле илсен кунта тасамарлăх пухăнмалли канализаци системи юрăхсăра тухнă. Çакăнти тĕп системăна инвалидсемпе ветерансем пурăнакан интернат çурт, Йÿçкасси шкулĕ, ача сачĕ, больница уйрăмĕ, 27 хваттерлĕ çурт сыпăннă. Канализаци çăлĕ тулса кайнă пирки кунти тасамарлăх виçĕ метрта вырнаçнă хушма хуçалăх çĕрĕ çине юхать, малалла вара айлăм тăрăх каять.

Çакăнти çĕр пробине пахалăх тĕлĕшпе ятарлă тĕрĕслев витĕр кăларнă. Экспертиза пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх унти çĕр санитари нормипе килĕшсе тăмасть. Гигиена нормативĕпе БГКП индексĕ 1 – 10 кл/г пулмалла пулсан кунта вăл 100 кл/г, энтерококк шайĕ те çавăн пекех. Нормативпа шайлашман кăтарту хуçалăхăн пĕтĕм лаптăкĕнче пуçламăшĕнче те вĕçĕнче палăрать. Çакă йăлтах çын сывлăхĕшĕн, пурнăçĕшĕн пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Çÿлерех асăннă канализаци системин ĕç-хĕлне тивĕçлĕ шайра йĕркелессинче Йÿçкасси ял тăрăхĕ ответлă. Ăна çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**"Роспотребнадзор" управленийĕн территори уйрăмĕн тĕп эксперт специалисчĕ.**

# Умри тĕллевсене пĕрле пурнăçламалла

**Вырма умĕнхи канашлуран**



Утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче район администрацийĕпе ял хуçалăх управленийĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисемпе, инженерĕсемпе тата агрономĕсемпе, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен пуçлăхĕсемпе черетлĕ вырма умĕн канашлу ирттерчĕç. Унта пухăннисем малтанах район администрацийĕн ларусен залĕнче Муркаш енĕн пĕрремĕш çур çулти экономикăпа социаллă аталанăвне пăхса тухрĕç. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çĕнĕлле тата пĕрле пулса ĕçлемелли пирки тĕслĕхсем илсе кăтартса ум сăмах каларĕ. Ун хыççăн район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – экономикăпа АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳçи В. Ананьев пĕрремĕш çур çула пĕтĕмлетсе анлă доклад туса пачĕ.

– Никам та алă усса ларман, анчах мĕн пурнăçлани те лăпланма сăлтав мар. Çĕнĕ технологисемпе тачăрах ĕçлесси, паянхи кун ыйтакан ĕç формисене пĕрле шыраси, пĕр тĕллев тавра пĕтĕçесси ыранхи ӳсĕмсен никĕсĕ пулнине паянах шута илмелле, – палăртрĕ сăмах пуçламăшĕнче Владислав Кириллович.

Пĕрремĕш çур çулта ял хуçалăх предприятийĕсем туса илнĕ продукци 216,8 миллион тенкĕпе (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 105,8 процент) танлашнă. Уйрăмах пысăк кăтартусем «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче (89,8 миллион тенкĕ), «Свобода» ăратлăх заводĕнче (23,6 млн. тенкĕ), «Ударник» унитарлă предприятире (22,6 млн. тенкĕ), Суворов яч. хис. кооперативра (19 млн. тенкĕ), «Оринино» хуçалăхра (15,6 млн. тенкĕ), Ильич яч. хис. хуçалăхра (13,7 млн. тенкĕ).

Çур çул хушшинче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче ĕçлекенсен хисепĕ çулталăк каяллахинчен 161 çын сахалланнă. Паян ял хуçалăх предприятийĕсенче 1084 çын вăй хурать. Вĕсен вăтам ĕç укçи январь – июнь уйăхĕсенче 9263 тенкĕпе танлашнă.

Пĕрлехи тăрăшулăхпа пур харпăрлăх формиллĕ ял хуçалăх предприятийĕсем чĕрĕ виçепе 2175 тонна (пĕлтĕрхинчен 81 тонна сахалрах) аш-какай туса илнĕ. Çав вăхăтрах сĕт сăвасси 108 тонна ӳссе 21,7 пин тоннăна çитнĕ. Сăвăма «Путь Ильича» агрофирмăра, «Колос», Чапаев яч. хис., «Свобода», «Герой» хуçалăхсенче 62 – 15 процент ӳстерме мехел çитернĕ.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче туса илнĕ 37,9 млн. штук çăмарта та çулталăк каяллахинчен 1,3 процент ытларах.

– Паян уяр кунăн кашни минучĕсехечĕпе туллин усă курса вырмана хатĕрленмелле. Кĕрхи культурăсем тулли пучахсене усса çĕр ĕçченне хăйсем патне чĕнеççĕ. Хăш-пĕр пусăри тырра аланипех кĕлете хума пулать, мĕншĕн тесен вăл пиçсе çитнипе пĕрлех типĕ те. Çакă вăл – тырăн хăй хаклăхне чакармалли пĕр çул. Ĕçре кунашкал кашни мелпе туллин усă курсан хуçалăхсен экономики те тĕреклĕнĕ, аталану та вăй илĕ, пурнăç условийĕсем те юсанĕç, – терĕ патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ С. Николаев.

Кун хыççăн Сергей Александрович «хир карапĕсен» юсавлăхĕ çинче чарăнса тăчĕ. Районта пĕтĕмпе 69 комбайн пур пулсан тĕрлĕ сăлтавсене пула (çав шутра механизаторсем çитменнипе ытларах) 18-шĕ уй-хире тухасси иккĕленӳллĕ. Çакнашкал лару-тăрура пĕр «хир карапĕ» пуçне вырмалли лаптăк вăтамран 267 гектар тивет. Комбайнсене вырмана хатĕрленĕ чух асра тытмалли пĕр самант – ĕçе тухма патшалăх техника надзор инспекторĕнчен ирĕк илесси. Çакна валли хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçе хатĕрленĕ комбайн çинче пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнасси çинче те С. Николаев тĕплĕ чарăнса тăчĕ.

Тырă вырмалли комбайнсене çĕнетессипе те район пĕр вырăнта тăмасть. Паянхи куна А. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ «Полесье-812» комбайн, «Передовик» хуçалăх «Полесье-1218» комбайн çĕнĕрен туяннă пулсан, машинăпа трактор паркĕсене тĕллевлĕ çĕнетессин программипе вырмана тухсах кайиччен çĕнĕ «хир карапĕсем» «Герой», «Путь Ильича», «ВаСем» хуçалăхсене те килсе çитмелле.

Вырма пуçланнипе пĕрлех умра кĕр аки пулнăран ларусен залĕнчи канашлу хыççăн унта хутшăннисем пĕрле пулса элитăллă тата пысăк репродукциллĕ тырă-пулă хирĕсене çитсе унти лару-тăрупа паллашрĕç. Кĕр акире паха вăрлăхпа çеç ĕçлес шутлисем мĕнле культурăна хăш хуçалăхран туянасси пирки те палăртса хучĕç.

Çул çӳрев Е. Андреев яч. хис., Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис., Ильич яч. хис., «Ударник» хуçалăхсен уй-хирĕсем урлă иртрĕ.

Çав кун пиçсе çитнĕ ырашпа кĕрхи тулă пуссисем çинче вырма вăхăчĕ çитнине систерсе ăрша вылятчĕ. Паян та çанталăк уяр. Кун тăршшĕ вара пĕр сехет те 12 минут кĕскелчĕ...

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: канашлăва хутшăннисем Ильич яч. хис. хуçалăхри таса та тирпейлĕ, пысăк тухăç шантаракан кашни уйрах ĕçлĕ калаçу ирттерчĕç. Кунти çĕнĕлĕхсем кашниншĕнех хавхалантару саманчĕ пулчĕ тесе калас килет. Хуçалăх ертӳçи И. Николаев çĕнĕлĕхсемпе паллаштарсах пычĕ.**

**Сăмах – специалиста**

## Ампарсем хатĕр-и?

Район уй-хирĕсенче «хир карапĕсем» ĕçе кӳлĕнсен çĕнĕ çăкăрăн конвейерĕ куллен вăй илсе пырĕ. Çак ĕçри черетлĕ утăм – ампар. Хатĕр-и вĕсем çĕнĕ çăкăр йышăнма?

Тырăна упраннă вăхăтра сăтăрçăсем сиен ан кӳччĕр тесен çĕнĕ тырăччен ампарсене унччченхи çӳп-çапран тасатмалла, юсав ĕçĕсем тумалла, нӳрĕ е аэрозольлĕ майпа дезинфекцилемелле. Нӳрĕллĕ майпа дезинфекци тăвас пулсан опрыскивательпе тырă хранилищин шал енне пĕр тăваткал метр пуçне 50 миллилитр хутăш шучĕпе «фуфанон», «каратэ», «зеон», «актеллик», «кемифос» тата Раççей территорийĕнче усă курма ирĕк илнĕ ытти имçамсемпе пĕрĕхсе тухмалла. Çакăнта ĕç хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалла. Аэрозольлĕ майпа дезинфекци ирттерсен ампар пӳлĕмĕсене виçĕ талăк хупă тытмалла.

Çĕнĕ тырă йĕтем çине киличчен йĕтем таврашне те опрыскивательпе имçамламалла. Кунти çум куракĕсене маларах çулса тасатмалла.

Май килнипе усă курса çакна та каласа хăварассăм килет. Ампарсене дезинфекцилеме хуçалăхсем пирĕн пулăшупа усă курма пултараççĕ. Çакна валли вĕсен пирĕнпе çыхăнмалла кăна. Ĕçĕ, паллах, тӳлевлĕ. Пĕр тăваткал метр дезинфекцилеме 2 тенкĕ те 50 пус. Анчах çак суммăра препарат хакĕ те, ĕç тӳлевĕ те. Паянхи куна пирĕн пулăшупа Суворов яч. хис. хуçалăх усă курчĕ те. Пулăшу ыйтса «Путь Ильича», «Свобода», Ильич яч. хис. хуçалăхсем те çыхăнчĕç. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те катара юлмасса шанатăп. Пирĕн тел.: 62-2-77.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА,**
**«Россельхозцентр» ФГБУн ЧР филиалĕн районти уйрăмĕн тĕп агрономĕ.**

**Механизаторсене пĕлме**

## «Трактор» уйăхлăх пуçланать

Хресченĕн чи хĕрӳ ĕç çи тапхăрĕ пырать: ырана юлмасăр вырлăх апачĕ çитеклĕ янтăламалла, вырма кантăкран шаккать – ăна тивĕçлипе хатĕрленсе çухатусемсĕр ирттермелле, кĕр аки çывхарать – ун пирки те шутламалла. Çак вăхăтра, паллах, ял хуçалăхĕнче тракторсемпе вĕсен прицепĕсемсĕр, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăсăр ĕçсене тивĕçлĕ пахалăхпа тата агротехника ыйтнă пек шутлă вăхăтра пурнăçлама çук. Анчах çакна курса-пĕлсе тăраканăн ку вăхăтра асăрханулăх пирки те манма юрамасть. Ĕçсене халăх йышлă хутшăнни тапхăрта çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Маларах каланине шута илсе республикăра çулленех август уйăхĕнче «Трактор» профилактика уйăхлăх-операци ирттересси йăлара. Иртнĕ кунсенче Чăваш Республикинчи Хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕпе Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерстви çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Трактор» уйăхлăх-операци ирттересси пирки хушу кăларчĕç. Асăннă тапхăрта патшалăх техника надзор инспекцийĕн ĕçченĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе пĕрле çынсен тата предприяти-организацисен харпăрлăхĕнчи тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕрех пулĕç. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, питех те кивелнĕ техникăна учетран кăларасси, техникăпа усă курнă çĕрте ĕç культурине ӳстересси малти вырăнта пулĕ.

Айăплисем тĕлĕшпе касару пулмĕ. Тупса палăртнă çитменлĕхсемшĕн вĕсен çирĕп явап тытма тивĕ.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР Гостехнадзорăн районти инспекторĕ.**

**Çĕнĕ çăкăр тата пушар хăрушсăрлăхĕ**

# Вырма «хĕрлĕ автансăр» ирттĕр

***Вырма алăкран шаккать. Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ӳстернĕ тырă-пулăна çухатусемсĕр пуçтарса кĕртесси – кашнин тĕп тĕллевĕ. Хĕрӳ тапхăрта пушарсем сехре хăпартни тата вĕсем çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхне самантрах пысăк сиен кӳме пултарни пирки те манма юрамасть. Çавăнпа та паян эпир хамăр тĕпеле районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн инспекторне К. ПОПОВА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Константин Геннадьевич, вырмара çулленех хире тухнă техника, тырă типĕтмелли агрегатсем, типĕтсе янтăланă улăм, тырă склачĕсем çунса кĕлленĕ тĕслĕхсем пулаççĕ. Мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать вĕсем тĕлĕшпе?**

– Иртнĕ çулсенчи вырмара пушар тухни хамăр районта та пĕрре мар пулчĕ. Çакă малашлăха пăхса ĕçлекен, тăрăшакан çĕр ĕçченĕшĕн хăрушла ӳкерчĕк. Вырма вăхăтĕнче тухнă пушарсене тишкерсен «хĕрлĕ автанăн» сăлтавĕсем çулленех пĕр евĕр сыхланса юлни шухăшлаттарать. Вĕсем: вырмара усă сулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулни, ĕçе хутшăнакан техникăна пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ комплектламанни, çиçĕм çапасран хӳтĕленменни, электрооборудование юсавлă тытманни, тырă типĕтмелли агрегатсене температура датчикĕсемпе тивĕçтерменни (çак сăлтавпа çулленех тырă типĕтнĕ вăхăтра вуншар тонна тырă çунса кĕлете кĕреймест) тата ытти те. Çаксене курса-пĕлсе тăнă çинчех ял хуçалăх производство кооперативĕсенче тата продукци тирпейлекен предприятисенче вырмара пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснине, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ калаçăмне-асăрхаттарнине шута хумаллине çулленех куратпăр, анчах... Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

**– Çывăх кунсенчех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем вырмана тухĕç. Анчах çакă паянччен мĕн туса çитерейменни çине алă сулмаллине пĕлтермест вĕт?**

– Сирĕнпе пĕтĕмпех килĕшетĕп. Пушар хăрушлăхĕ хĕрӳ ĕç çирен катара тăтăр тесен çĕр ĕçченĕн ĕнер туса çитерейменнине паян пурнăçласси те пăрăнмалла мар. Вырмана хутшăнакансене – хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсене, механизаторĕсемпе рядовой ĕçченĕсене – паян манăн çакăн пек сĕнӳсем парас килет:

– вырмана хутшăнакан ял хуçалăх техникине тата тырă типĕтмелли комплекссене пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçе хатĕрленĕ хыççăн вырăнти специалистсенчен тата ытти яваплă çынсенчен йĕркеленĕ комиссия ятарлă актпа йышăнсан çеç ĕçе кĕртме юрать;

